# Ентешпе мухтанатпӑр

Елчӗкри историпе тӑван тавралӑх халӑх музейӗнче Владимир Агеев ӳнерҫӗн юбилейне халалланӑ «Асамлӑх тӗнчи – хамӑн чӗререн» куравӗ ӗҫлет. Ӑна Владимир Ивановичӑн музей фондӗнче упранакан картинисенчен, архиври материалсенчен йӗркеленӗ. Ҫавӑн пекех пире художникӑн тӑванӗ Ирина Егорова педагог нумай пулӑшрӗ. Вӑл мӑн асламшӗн И.Н.Агеевӑн (Владимирӑн ашшӗн) кун кӗнекине, паллӑ художник ҫинчен тӗрлӗ хаҫат-журналти материалсене, картинисене пачӗ.

Владимир Иванович Аслӑ Елчӗк ялӗнче 1932 ҫулхи ака уйӑхӗн 2-мӗшӗнче ҫуралнӑ. Ялти ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкултан вӗренсе тухсан Шупашкарти ӳнер училищинче малалла ӑс пухнӑ. 1952-1955 ҫулсенче салтак службинче тӑнӑ. Алла диплом илсен республикӑри шкулсенче черченипе рисовани урокӗсене ертсе пынӑ. Каярахпа Чӑваш кӗнеке издательствинче кӗнекесем илемлетнӗ, уйрӑм ӗҫсемпе те ларнӑ. Унтан «Капкӑн» журналта тӑрӑшса хӑйне сатирӑра туптанӑ. Унӑн картинисен уйрӑмлӑхӗ вӑл – станоклӑ живопиҫпе тата графикӑпа усӑ курни. Ҫак мелпе ӳнерҫӗ 1960-1970 ҫулсенчех ӗҫлеме пуҫланӑ. В.Агеевӑн кашни картининчех чӑвашлӑх туртӑмӗ палӑрать. Аллегорипе, философилӗхпе, символсемпе анлӑ усӑ курать Владимир Иванович.



Унӑн паллӑ картинисем: «Хӗр тантӑшсем», «Ҫӗр», «Юрӑ», «Ырӑпа усал тӗнчи», «Нарспипе Сетнер», «Ҫӑлкуҫ умӗнче», «Елчӗк пасарӗ» тата ытти те. Пирӗн ентешӗмӗрӗн картинисем тӗнчипех саланнӑ. Австралире, Германире, Турцире, Китайра, Америкӑра, Израильте, Мускавра, Санкт-Петербургра, Йошкар-Олара, Чулхулара, уйрӑм ҫынсенче, музейсенче упранаҫҫӗ.

Сумлӑ юбилей умӗн Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев Владимир Агеев художника «Чӑваш Республики умӗнчи тава тивӗҫлӗ ӗҫсемшӗн» орден медалӗпе наградӑласси ҫинчен йышӑну кӑларчӗ. Пуш уйӑхӗн 24-мӗшӗнче Шупашкарти ӳнер музейӗнче пирӗн ентешӗн куравӗ уҫӑлчӗ. Унта Чӑваш Республикин культура министрӗ Констанин Яковлев чӑваш халӑх ӳнерҫине саламланӑ май ӑна ҫав орден медалӗпе чысларӗ. Чыса ӳнерҫӗ Чӑваш Республикин ырлӑхӗшӗн нумай ҫул таса чунпа ӗҫленӗшӗн тивӗҫрӗ.

Эпир хамӑр ентешпе савӑнатпӑр, мухтанатпӑр. Вӑл чӑваш историне, пурнӑҫне, пурнӑҫ таппине хӑйӗн картинисенче курӑмлӑ сӑнласа парать.

Елчӗк музейӗнчи выставка ака уйӑхӗн 20-мӗшӗччен ӗҫлет.

**С.СТЕПАНОВА.**

***Сӑнӳкерчӗкре: В.Агеев художник.***